# ÇĂЛТĂРСЕМ ПАТНЕ ÇУЛ

## /ФАНТАСТИКА/



**Паян Коля яланхи пекех çиччĕре тăчĕ, çирĕ, чей ĕçрĕ. Пÿртре шăп, Кольăн амăшĕ ĕçе кайнă, паян килмест.**

Кукамăш вырăнĕ çинчен кушак сикрĕ, арçын ача урисем патне пычĕ, ачашланма пуçларĕ. Анчах чим-ха! «Кушакĕ пирĕн мар вĕт!» — шухăшларĕ Коля. Чăнах та, вĕсен кушакĕ хурапа шурă тĕслĕ, кăкăрĕ çинче хура «галстук» çакса янă евĕр, ку вара хуп-хура пуçлă, хăй шап-шурă.

— Мĕнле кушак эсĕ, камăн? — ыйтрĕ Коля кушакран.

— Эпĕ Магретта ятлă, Валаси планетинчен, — хуравларĕ хайхискер.

Коля тĕлĕннипе урайне ларчĕ, ĕненмерĕ, хăйне питрен темиçе хут çатлаттарчĕ, куçне хупрĕ.

— Çук, çук, çук, эп çывăратăп, тĕлĕк куратăп. Ман умра — Кузя, хамăрăн кушак. Çитменнине кушаксем калаçмаççĕ, — лăплантарчĕ вăл хăйне.

Куçне уçрĕ те... кушак ун умĕнчех! Вăл Коля çине тĕпчесе те кăсăкланса пăхать.

— Э-э-эпĕ К-к-оля ят-лă, — терĕ хăранипе ача.

— Пĕлетĕп. Мана сан патна Валаси патши ячĕ. Кăтарт-ха хăвăн дневника?

— Х-х-халех... — терĕ те Коля хăйĕн сумки патне чакрĕ, дневник туртса кăларчĕ, кушака шикленсе пачĕ.

— Пăхар, — терĕ те кушак, дневника уçа-уçа арçын ачан оценкисене тимлĕн пăхма пуçларĕ. — Чăн калать патша, пире лайăх вĕренекен ача çеç пулăшма пултарать.

—Мĕншĕн эпĕ? Эпĕ кăна лайăх вĕренместĕп вĕт, Олегпа Игорь манран нумай пĕлеççĕ!

— Çук. Олегпа Игорь çырса илсе пурăннипе кăна лайăх паллăсем илеççĕ. Эсĕ вара хăв та лайăх вĕренетĕн, юлташусене те пулăшатăн. Атя, хатĕрлен.

— Ăçта?

— Уй, мĕн ухмаха перетĕн? Каларăм вĕт, Валаси планетине çăлма! — терĕ те кушак çавăнтах Кольăна мĕн кирлине сумкăна чикме пуçларĕ.

Арçын ача шухăша путрĕ: «Эпĕ паян ачасемпе музея каясшăнччĕ, эх, ăçтан тупăнчĕ ку кушак ман пуç çине? Мĕншĕн паян? Мĕншĕн ыран мар?»

Пÿртре каллех шăп, хăш чухне çеç кушак сумкăпа чăштăртатни илтĕнет. Чÿречерен юр ÿкни курăнать. Пĕрремĕш юр ÿкнĕ кун Кольăн пурнăçĕ тĕлĕнмелле улшăнчĕ.

Арçын ача валли интереслĕ те хăрушă çулçÿревсен вăхăчĕ çитрĕ...

**/Малалли çитес номерте/**
**Дима СОКОЛОВ , 9 класс,**
**Калайкасси шкулĕ**

# Хĕл те çитрĕ

**Акă хĕл те çитрĕ. Çĕр шап-шурă кăпăшка юрпа витĕнчĕ. Хăш-пĕр чухне çерçи пуçĕ пек шултра юр çăвать.**

Йывăççем шурă çĕлĕк тăхăннă пек туйăнаççĕ. Уйрăмах вĕсем шартлама сивĕре, пас тытсан илемлĕ. Вăйлă çилпе йывăççем çинчен юр тăкăнса пĕтсен, вĕсем тăллăхăн курăнаççĕ. Хуп-хура йывăççем кашласа илеççĕ е шăп,чĕнмесĕр лараççĕ. Вĕсем хумханса кăларакан сасă çын хаш-ш-ш!сывласа илнĕ пек туйăнать. Лапсăр-лапсăр пĕлĕте кахал шур упапа танлаштарма пулать. Вăл хуллен шуса пырать, пĕчĕк ача тейĕн. Тавралăха шурă мамăк витнĕ. Епле илемлĕ хĕлле! Шартлама сивĕ килсе çитсессĕн, тÿрех ĕçе пикенет: юханшывсемпе пĕвесем урлă кĕмĕл кĕпер, хывать, кантăксем çинче хитре тĕрĕ тĕрлет. Шартлама сивĕ ачасене питкуçран, сăмсаран чĕпĕтет. Анчах та ачасем унран хăрама шутламаççĕ те. Вĕсем çунашкасемпе, йĕлтĕрсемпе çырмана васкаççĕ. Пуçланать вара çуйхашу, вăйă-кулă, тĕркешÿ .

> Шартлама сивĕ ачасене пит-куçран,сăмсаран чĕпĕтет. Анчах та ачасем унран хăрама шутламаççĕ те. Вĕсем çунашкасемпе, йĕлтĕрсемпе çырмана васкаççĕ.

Юр пĕрчисем тата! Епле черчен те асамлă вĕсем! Вĕсене шурă хут çине ÿкерсе касса кăларнă тейĕн. Темле тĕрĕ те пур . Пĕри чечеке аса илтерет,- тепри — çăлтăра. Юр пĕрчисем сывлăшра шур акăшсем ташланăнах туйăнаççĕ, ал тупанĕ çинче часах ирĕлсе каяççĕ. Çавăнпа вĕсене тытма тăрсан: «Ан тĕкĕнсем мана, эпĕ ирĕлсе кайсан, манăн эреш-тĕррĕм çухалать », — теççĕ тейĕн.

Хĕл сивĕ, анчах унăн чуна илĕртекен ăшши те сахал мар. Çавăнпа эпĕ ăна юрататăп та .

***Аврора***
***/Калайкасси шкулĕ/***

# ПУЛĂПА ТИНĔС

## /ЮМАХ/

**Пурăннă тет тинĕс тата пулă. Вĕсем туссем пулнă, яланах пĕрле. Анчах пулла никам та асăрхаман. Тинĕсе вара пурте мухтанă, ун илемлĕхĕпе киленнĕ. Пулла ку питĕ тарăхтарнă.**

— Итле-ха, тинĕс,— тенĕ пулă. — Эсĕ питĕ пысăк, çавăнпа сана пурте кураççĕ, пурте пĕлеççĕ, пурте юратаççĕ. Анчах та эсĕ эпĕ пурри пирки çеç пысăк. Эпĕ кайсанах сана асăрхами пулĕç. Эпĕ пуррипе анчах эсĕ илемлĕ.

— Ан тĕлĕнтер-ха, пулă. Эсĕ пулă лупашкара пурăннине ăçта курнă? Тинĕс пулли тинĕсре çеç пурăнайрать. Ытти çĕрте пĕтетĕн эсĕ, — хуравланă тинĕс.

— Атя тупăшатпăр. Эпĕ сансăр та пурăнма пултаратăп.

— Юрĕ. Эпĕ сана пĕр лупашкана ывăтса ярăп. Пĕр эрне чăтайратăн-и?



— Пĕр эрне? Ан култар-ха, пĕр эрне мар, ĕмĕрĕпех унта пурăнăп. Сан пата тек таврăнмăп.

— Йывăр пулсан кала. Эпĕ сана каялла илсе килĕп. Килĕшмелле-и? Анчах та эсĕ малтан мана ахальтен кÿрентернĕшĕн каçару ыйтăн.

— Каçару ?! Хă, тата... Ну, юрĕ, килĕшмелле.

— Апла пулсан лар манăн хум çине, эпĕ сана ывăтса ярăп.

Пулă хум çине ларать те, тинĕс ăна ывăтса ярать. Акă пулă пĕр лупашкна кĕрсе ÿкет. Пĕр кун пурăнать вăл лупашкара — япăх мар, тепĕр кунне шыв пăтранма пуçлать. Таса мар шывра сывлăш та çитми пулать. Çиме те нимĕн те çук...

— Мĕнле пурăнатăн?

— Лайăхах, — тесе суять пулли, хăй тĕрĕс мар тунине тинĕсе пĕлтерес мар тесе.

— Эпĕ те лайăх пурăнатăп, — тет лешĕ.

Тепĕр кун иртет, пулă аран-аран сывлать. Вăйĕ те пĕтсе пырать. Лупашка ăна тинĕсрен каçару ыйтса ун патне таврăнма канаш парать. Пулă парăнасшăн мар. Тепĕр икĕ кунтан пулă тинĕсрен каçару йăлăнса ыйтма та хатĕр, анчах вăй çук. Çитменнине лупашка та типсе ларать. Ни вилĕ, ни чĕрĕ пулла ачасем тупаççĕ, унпа выляма пуçлаççĕ. Айван ачасем пулла тинĕсе кайса яма ăс çитереймеççĕ. Пулă шыв çитменнипе вилет. Тинĕс вара тата нумай çул пурăнать. Мăн кăмăллă, мухтанчăк пĕчĕк пулă çинчен вăл часах манса каять.

**Маша КРАСНОВА,**
**5 класс, Калайкасси шкулĕ**



# ТАВАХ САНА, АННЕÇĔМ

***Пĕрремĕш юрату***



Алăкран шаккать-ши вăл,
Кантăкран пăхать-ши вăл,
SMS ярать-ши вăл,
Пĕрремĕш юрату?

Мечĕк хăвалать-ши вăл,
Самолет ярать-ши вăл,
Хăюран туртать-ши вăл,
Пĕрремĕш юрату?

Анăçран анать-ши вăл,
Тухăçран тухать-ши вăл,
Хăш енчен килет-ши вăл,
Пĕрремĕш юрату?

***Анне***

Анне мана çуратнă,
Юратнă пепкине.
Хуп сăпкара сиктернĕ,
Юрланă юррине.

Анне мана вĕрентнĕ
Ĕçре малта пыма.
Чăваш чĕлхи пилленĕ,
Вĕрентнĕ çын пулма.

Тавах сана, аннеçĕм,
Пуриншĕн те тавах.
Эс пирĕншĕн хĕвел пек
Çуталăн яланах.

***Муркашри музейра***

Пулатпăр эпир пĕрмай
Муркашри тĕп музейра.
Пăхмалли питĕ нумай
Тĕлĕнетпĕр те вара.

Кĕретпĕр те пĕр зала —
Тумтирпе-çке вăл пуян.
Кĕретĕн тепĕр зала —
Савăт-сапана куран.

Чăваш сурпанне вара
Пурте тĕлĕнсе пăхаç.
Муркаш район музейне
Таврара пурте мухтаç.

### *Йăмăк валли сăвăсем*

***Ĕне***

Пирĕн Паниç ĕне пур.
Курăк çиет, пăх-ха, кур.



Пĕчĕк йăмăк сăпкара
Сĕт ĕçесшĕн апатра.

***Упа***

Упа, упа, утаман,
Ик урапа утакан
Итлемен ачасене
Тыта-тыта каякан.

***Йăмăкăм***

Пĕчĕк Владăн тяпи пур,
Пирĕн Владăн алли пур,
Пирĕн Владăн куçĕ пур,
Пĕчĕк Владăн тути пур.

Ик урипе шарт! тапать
Аллипе çат-çат! çапать,
Куçĕпе чăр-чăр пăхать,
Пĕчĕк тути юр юрлать.

**Ирина Сибякова,**
**Москакасси шкулĕ**

**Хисеплĕ вулакансем! Эсир маттур та пултаруллă пулнине ыттисем те пĕлччĕр. Сиртен сăвăсем, калавсем кĕтетпĕр.**

# ЮРАТНĂ АННЕНЕ

Тăван кукамая эпĕ курман. Анне пĕчĕк чухнех вилнĕ вăл. 9 ачапа тăрса юлнă кукаçи авланнă — Елизавета Никифоровнăна качча илнĕ. Пирĕн кукамай — Елизавета Никифоровна тăхăр ют ачана хăйĕн ăшшине панă, тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Халĕ вăл ку тĕнчере çук. Анчах та вăл 9 ачи чунĕнче çеç мар, 13 мăнукĕн асĕнчех пурăнать. Эпир те килте асаннене час-часах аса илетпĕр. Çав тери чăтăмлă, ĕçчен, паттăр çын пулнă пирĕн кукамай. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх усранă, колхозра ĕçленĕ. Пире лăпкаса тутлă кучченеçсем çитернине те лайăх астăватăп. Ун чухне эпĕ ултă çулта пулнă.

Алина МАТВЕЕВА,
Очăкасси шкулĕ, 6 класс

Мĕнле йывăр пулнă пулĕ манăн аннене — Елена Германовна пилĕк ачапа тăлăха тăрса юлсан.Атте вăхăтсăр çĕре кĕнĕ хыççăн вăл пире çын тăвасшăн тăрăшрĕ,кил-çурт та çавăрчĕ. Пире, ачасене, çынсем хушшинче çын пек пулма вĕрентрĕ.Пирĕнпе яланах ырă кăмăллă та сăпайлă пулчĕ. Тĕрĕс мар ĕç тусан вĕрентсе ăнлантарчĕ. Вăл ялти çынсене те яланах пулăшма хатĕр,çавăнпа та ял çыннисем анне патне час-часах килеççĕ.

Эпĕ аннене питĕ хытă юрататăп. Савăнăçлă чухне вăл тÿпери çутă хĕвел пекех туйăнать: шÿтлет, лăпкать, юрлать, вĕрентет. Аннене ялан савăнăçлă курас килет. Çавăншăн тăрăшатăп та.

**Алена ПУЧКОВА,**
**Очăкасси шкулĕ, 8 класс**

Манăн анне — Венера Филимоновна 20-мĕш çул ĕнтĕ ялти фельдшерпа акушер пункчĕн заведующийĕнче вăй хурать.

Кама кăна сыватман-ши вăл çак çулсенче? Кама эмелпе, кама ăшă сăмахпа, кирлĕ сĕнÿпе.

Аннен килте тăма вăхăчĕ те çук. Ĕçрен килсен те час-часах пулăшу ыйтакансем патне кайма тивет унăн. Хăйне тем пек йывăр пулсан та вăл ыттисене пулăшма тăрăшать. Ашшĕ-амăшĕсен комитетне те ертсе пырать, хĕрарăмсен канашĕн ĕçĕнче те тимлет. Пире те, икĕ ывăлне, çын тăвас тесе тăрăшать.

Пирĕн анне — чи хитри. Унăн чунĕ — чи ăшши, чи лайăххи.

**Павел МАТВЕЕВ,**
**Очăкасси шкулĕ, 8 класс**



Калайкасси шкулĕнчи
8Б класра вĕренекен

***Воробьева Настьăн***

Çуралнă кунĕ. Эпир ăна çирĕп сывлăх, вĕренÿре ăнăçу, тус-юлташсемпе уçă кăмăллăх тата сăпайлăх сунатпăр. Сан пурнăçунта мĕн ĕмĕтленни йăлтах пурнăçлантăр: пинĕ-пинĕпе долларсем сейфсенче выртччăр, гаражра вуншар машина лартăр, темиçе кермен пултăр. Чи кирли — пур çĕрте те пĕрер савни.

**8Б класс ачисем**

### РАШТАВĂН 10-МĔШĔНЧЕ



*Калайкасси шкулĕнче*
*9-мĕш класра вĕренекен*
*Степанова Викăн çуралнă кунĕ*
*пулать. Эпир ăна чун-чĕререн*
*саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, телей*
*сунатпăр.*
*Яланах лайăх вĕрен, тус-*
*тантăшсене ан ман,аннене юрат.*

*Салампа Дима Соколов*